# Унăн архивĕ – хаклăран та хаклă пуянлăх




*Халăх ĕçĕнче паллăран та паллă йĕр (кунта сăмахăмăр, ăнланмалла ĕнтĕ, ырă йĕр пирки) хăварнă çынсен сăнарĕ вăхăт иртнĕçемĕн татах та уçăмланать. Паллах, вĕсен пурнăçĕпе ĕç-хĕлне тĕрĕслĕх али витĕр кăларса тĕпчесен. Н.В.Никольский профессора ку енĕпе «ăннă» теме юрать. Чăн та, ăна халалласа çырнă кĕнекесем, брошюрăсем, статьясем, – шучĕпе илсен, И.Я.Яковлев пурнăçĕпе ĕç-хĕлне çутатнă пичет материалĕсенчен чылай сахалрах. Анчах кунта, философи категорийĕпе хакласан, шут хисепе куçни çинчен калама юрать-тĕр.*

Ку енĕпе нумай тĕпчевçĕ «Хыпар» хаçат редакцийĕн пархатарлă та тĕллевлĕ ĕçне тĕрĕсех палăртать. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ (ЧПГĂИ) хатĕрлесе кăларнă ăслăлăх палăкĕ – Н.В.Никольскин çырнисен пуххин тăватă томĕ – вулакан патне çитнинче те «Хыпар» тӳпи-витĕмĕ пĕлтерĕшлĕ. Аса илтерем: институт планĕнче (2002 ç.) икĕ том кăна пулнă, эпир çичĕ томпа кăларма сĕнтĕмĕр. «Хыпар» хаçатăн 90 çулхи юбилейне хатĕрленсе ирттернĕ темиçе уйăхра кăна сахалтан та çĕр ытла материал тухрĕ: вĕсенче пуринче те тенĕ пекех Николай Васильевичăн тĕрлĕ енлĕ ĕçне хакланă. Чи пахи – Никольские курнă, унпа тĕл пулса калаçнă çынсен, унăн тăван-хурăнташĕн, ентешĕсен аса илĕвĕсем.

Вăл çуралнăранпа 125 çул çитнине уявласа правительство нумай мероприяти ирттерме йышăнчĕ. Пĕтĕмлетӳ: маларах асăннă тăватă томлăх, Н.В.Никольскин Муркаш районĕнчи Ваçкассинчи музейĕ, Шупашкарти унăн ячĕллĕ проспектпа педагогика колледжĕ, Хусанти Ар масарĕнчи вил тăпри çинчи чаплă палăк, ЧР Журналистсен союзĕн премийĕ, Чăваш Енри чылай шкулпа вулавăшра ирттернĕ мероприятисем. 2011 çулта («Хыпар» хаçат 105 çул тултарнă çул) харăсах икĕ монографи пичетленсе тухрĕ: «Н.В.Никольский – ученый, просветитель, общественный деятель» (авторĕсем – В.Д.Димитриев, А.П.Леонтьев, Г.Б.Матвеев; 303 с.); «Хыпар»: минувшее и настоящее. Факты, события, личности, судьбы» (авторĕ – А.П.Леонтьев; 604 с.).

Малалла вара – çав тери анлă сарăлнă «анчах…»

Анчах юбилей кунĕсенче хăпартланса каланă сĕнӳсем, палăртнă тĕллевсем сăмах хальлĕнех юлчĕç. Паллах, Н.В.Никольскин ăслăлăх еткерĕ архивсенче тусан пухса выртмасть. Пирĕн институт тĕпчевçисем çеç мар, ытти çĕр-çĕр автор та унăн Ал çыру фончĕпе куллен тухăçлăн усă кураççĕ. Çав вăхăтрах вăл хатĕрлесе хăварнă ăслăлăх ĕçĕсем ниепле те кĕнекеленсе тухаймаççĕ-ха. (Çырнисен пуххине кĕнĕ ĕçсем хăй вăхăтĕнче тухнă.) Кунсăр пуçне Николай Васильевичăн ăслăлăхри, патшалăхпа общество пурнăçĕнчи çул-йĕрне туллин хакласа пĕтĕмлетнĕ уйрăм тĕпчев ĕçĕсем çук, калăпăр: «Никольский – Хусан кĕпĕрне земство управин председателĕ», «Никольский – этнограф», «Никольский – педагог-çутта кăларуçă» т. ыт.

«Çул-йĕр», ăнланмалла, сăнарлă калани. Гуманитари ăслăлăхĕсем – этем обществине, этеме хăйне тата унăн культурине тишкерекен тĕпчев-вĕрентӳ. Çак вĕçĕ-хĕррисĕр анлăшра пур еннелле те çулсем тăсăлаççĕ. Кашни çулĕн хăйĕн тĕллевĕ. Вĕсенчен кашнинпе утма вăй-хал çитерекен, ку çеç те мар, кашни çул тăршшĕпех хăйне евĕрлĕ палăк лартса хăваракан çын историре сахал. Çакнашкал полипрофиль (грек. *поли* – нумай йышлă, анлă; *профиль* кунта: професси, специальноç) ученăйсен йышĕнче – вырăссен М.В.Ломоносовĕ, В.Н.Татищевĕ, Н.М.Карамзинĕ. Шăпах вĕсемпе танлаштарнă Н.В.Никольские пирĕн паллă историк В.Д.Димитриев профессор. Чăнах та, Н.В.Никольский: историк, этнограф, лингвист, фольклорист, статистик, лексикограф, музыка тĕпчевçи, халăх медицинин пĕлӳçи, педагог-çутта кăларуçă, аслă шкулсен йĕркелӳçи, общество тата патшалăх деятелĕ, чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕн никĕслевçи, издателĕ тата редакторĕ, публицист, чăвашла çут ĕçпе вĕрентӳ литературин издателĕ, чăваш куçару ĕçĕн йĕркелӳçисенчен пĕри, Чăваш Енпе Вăтам Атăл тата Уралçи республикисемпе облаçĕсен учителĕсен, ученăйĕсен, журналисчĕсемпе писателĕсен, искусство ĕçченĕсен, общество, патшалăх деятелĕсен вĕрентӳçи.

Çак ретре Николай Васильевич ăслăлăх архивне пухса йĕркеленине уйрăммăн палăртса хăваратпăр. Мĕншĕн тесен пĕр çын пуçтарса хатĕрленĕ кунашкал фонд тĕнчипе те сахал. Эстон фольклорĕпе танлаштаруллă фольклор профессорĕн, революциччен Хусан университетĕнче ĕçленĕ Вальтер Андерсонăн хаклавĕнчен: «Н.В.Никольский пухса хăварни – тирпейлĕ те хăтлă ăслăлăх архивĕ, унта чăваш халăхĕн фольклорне, этнографине тата историне кăтартакан хаклăран та хаклă ăслăлăх материалĕ питех те йышлăн упранать… Фольклорăн кунашкал архивĕ çĕр чăмăрĕ çинче питех те сахал – виçĕ теçеткерен ытла мар. Вĕсенчен хăш-пĕрне уйрăм çынсем йĕркелемен, кунсăр пуçне укçа-тенкĕ нумай тăкакласа йĕркеленĕ. Кун йышши, сăмахран, Гельсингфорсри (Хельсинкири. – **А.Л.**) финн литературин архивĕ. Ытти архива уйрăм ученăйсем пуçтарса тытăмланă, çак тĕллевпе вĕсем хăйсем пекех энтузиастсене – çак ĕçе чунран парăннă, тӳлевсĕр ĕçлекен сотрудниксен анлă йышне – вĕрентсе хатĕрленĕ. Шăпах çакнашкал йĕркелӳçĕсен йышне кĕрет те ĕнтĕ Николай Никольский. Унăн ал çыру пуххине чăваш халăхĕн культурин хаклăран та хаклă мулĕ тесе йышăнмалла».

> «238 ТОМРАН 214-ШНЕ ИНСТИТУТ 1944-1945 ÇУЛСЕНЧЕ, ЫТТИСЕНЕ 1958 ÇУЛТА ТУЯННĂ»

Хушса хурар: Никольский архивĕнче вырăссен, тутарсен, крешĕнсен, çармăссен, удмуртсен, ирçесемпе мăкшăсен, комисен, калмăксен, кăркăссен, ытти чылай халăхăн пурнăçне нумай енчен уçса паракан материалсем те упранаççĕ. Хусанти Хĕвел тухăç халăхĕсен педагогика институчĕн Чăваш уйрăмĕн (1926-1931 çç.) тата Хусанти Хĕвел тухăç консерваторийĕн (1919-1922 çç.) докуменчĕсем тулли хальлĕн тенĕ пекех Никольский архивĕнче. Мĕншĕн тесен Чăваш уйрăмне Николай Васильевич хăй йĕркеленĕ, малтан унăн ертӳçи, унтан секретарĕ пулнă, консерватори вара вăл пуçарнипе йĕркеленĕ Атăлçи вак халăхĕсен пĕрлĕхĕн йышăнăвĕпе уçнă, ăна та (юлашки икĕ çул), кунти Ăслăлăх ассоциацине те вăл ертсе пынă. (Тирпейлĕн пуçтарса пынă документсем тĕпчевçĕсене кĕтеççĕ темелли çеç юлать.)

Ăслăлăх архивне Николай Васильевич 1904 çулта пуçтарма пуçланă. Унăн никĕсĕнче – вăл халăх хушшинче сарнă программăсем: «Программа для собирания сведений о чувашах» – 1904 ç., хăй кăларса тăнă «Чăваш календарĕнчи» анлă ыйтăмсем – 1911 тата 1913 çç., «Программа для собирания сведений о чувашах» (чăвашла) – 1912 ç., «Программа для собирания сведений об инородцах Поволжья» – 1915 ç., «Программа для собирания сведений по истории и археологии народностей Поволжья» (пурĕ 52 ыйту: археологи, истори, этнографи, халăх искусстви) – 1919 ç., «Вопросник по народному творчеству» – 1919 ç.

1931 çулччен 249 тома (управ единици) вырнаçмалăх ăслăлăх çăл куçĕсем пухма пултарнине паттăрлăхпа кăна танлаштарма пулать-тĕр. Кашни томра вăтамран – 200-300 листа (400-600 страница). Паттăрлăх çулташĕсем: ырми-канми ĕçченлĕх, пултарулăх, анлăран та анлă тавра курăм, халăхăн тĕрлĕ сийĕпе пĕр чĕлхе тупма пултарни, иккĕлентерми таса ят-сум… Тĕрлĕ çĕртен материалсем илсе тăнисĕр пуçне вăл хăй те шыравра. Хусан университетĕнче тата ун çумĕнчи Археологи, истори, этнографи обществинче пĕрле ĕçленĕ Н.Н.Фирсов тĕлĕннине пытармасть: «Н.В.Никольский хăйĕн пур-çук укçипе, айккинчи нимӗнле пулăшусăр, хуласенче, ялсенче истори-географи материалĕсем пуçтарса çӳрет, хăйĕн тĕпчевĕ валли кирлĕ материал шыраса уйăхĕ-уйăхĕпе тĕп хуласенче пурăнать».

1931 çулччен пуçтарнă терĕмĕр. Ун хыççăн вара? Пултарулăхĕ тапса тăнă, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларакан профессорăн ăслăлăхпа педагогика ĕçĕнчи çулне хупаççĕ. Пархатарсăр çак ĕçре чăвашсенчен И.Д.Кузнецов, С.С.Кутяшов, И.С.Тукташ, И.Я.Яковлев (Саламбек) «палăрнă». 1930 çулта Шупашкарта педагогика институчĕпе наука тĕпчев институчĕ уçăлнă, Никольский йыхрав кĕтсе илеймен. «Хыпар»: минувшее и настоящее» кĕнекене çырнă вăхăтра, редакци ыйтнине хуравласа, Федераци хăрушсăрлăх службин Хусан хула управленийĕ Никольский биографийĕнчи «шурă пăнчăсене» уçăмлатрĕ: Хĕвел тухăç халăхĕсен педагогика институчĕн профессорне 1931 çулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче «совет влаçне хирĕçле ĕçсемшĕн» арестленĕ, икĕ уйăхран ирĕке кăларнă. Çакăн хыççăн унăн ирĕксĕрех пенсие тухма тивнĕ. 1933 çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче каллех арест, юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнчен – ирĕкре. Ĕçе илмеççĕ… 1940 çулччен хи тапхăрта, Мари чĕлхепе литература ăслăлăх тĕпчев институтне ĕçлеме вырнаçиччен, Николай Васильевич хăйĕн архивне томăн-томăн йĕркене кĕртсе тытăмланă.

ЧПГĂИ Ăслăлăх архивĕн I пайĕн 103-мĕш томĕнче (395 стр.) Н.В.Никольский тăван ялĕнчен, Купăрляран (ун чухне вăл Элĕк районне кĕнĕ), Чăваш ăслăлăх тĕпчев институчĕн дирекцийĕ ячĕпе янă çыру упранать. Институт çырăвĕ упранса юлман, анчах вăл профессортан фольклор материалĕсене хăйĕн архивне пама ыйтни паллă. Н.В.Никольскин 1935 çулхи утă уйăхĕн 18-мĕшĕнчи хуравĕнчен: «Манăн фольклор материалĕсем хамăн библиотекăра (Хусан, Бауман урамĕ, 49 ç., 2 хв.). [Хамăн] архивсене эпĕ паман, хальлĕхе памастăп та, мĕншĕн тесен хамах йĕркене кĕртетĕп». Малалла архивне мĕнле майпа тытăмламалли пирки çырать, уйрăммăн палăртса хăварать: «Материалсене классификацилесси питĕ нумай вăхăт ыйтать. Çакна сехетсемпе шутласан – юмахсемпе кăна куллен 6-шар сехет ĕçлесен те çулталăкран кая мар кирлĕ. Юрăсемпе, музыка материалĕсемпе те çавăн чухлех; унта тата резервра: ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, ытти жанр». Тĕпчевçĕ пулăшмашкăн институтран пĕр-пĕр сотрудник яма ыйтать. Унăн ыйтăвне тивĕçтермеççĕ…

238 томран 214-шне институт 1944-1945 çулсенче, ыттисене 1958 çулта туяннă. Никольский пухнă материалсен 15 томĕ – Мари чĕлхе, литература, истори ăслăлăх тĕпчев институтĕнче, 5 томĕ – Мордва гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче, 1 томĕ Тутарстан Ăслăлăх академийĕн чĕлхе, литература тата истори институтĕнче упранаççĕ.

«Н.В.Никольский – ученый, просветитель, общественный деятель» кĕнекере эпир Хусан университечĕн Н.И.Лобачевский ячĕллĕ Ăслăлăх вулавăшĕн Сайра кĕнекесемпе ал çырăвĕсен пайĕнче Н.В.Никольский фончĕ пуррине каласа хăварнă. Анчах фондра мĕн упранать? 2019 çулта манăн асăннă пайра ĕçлеме тӳр килчĕ. Паллах, чи малтан Никольский фончĕпе паллашрăм. Фондри материалсемпе усă курнине шута илекен кĕнекере вĕсене никам та тытса вуламаннине пĕлсен тĕлĕнтĕм тени ытла та çемçе хаклав пулĕччĕ. Архивçă пĕр том хыççăн теприне илсе килсе пама тытăнчĕ. Вăхăт хĕсĕкрен 30 тома кăна тишкерме май килчĕ… Тепĕр 16 том патне çывăх вăхăтрах таврăнма тĕллевленни коронавирус сарăлнине пула пурнăçланаймарĕ.

Кăçал ЧПГĂИ тата Тутарстан Ăслăлăх академийĕн Ш.Марджани ячĕллĕ истори институчĕ пĕрле 46 тома кĕскен хаклакан кăтартмăш (указатель) кăларчĕç (пухса хатĕрлекенĕ – истори ăслăлăхĕсен докторĕ Р.Р.Исхаков). Тираж пĕчĕкрен (150 экз.) унпа кăмăл тăвакансем пурте паллашасси иккĕлентерет. Çавăнпа Н.В.Никольскин ăслăлăх тинĕсĕн тин çеç уçнă утравĕпе йышлă вулакана паллаштармаллах. Кун пирки – тепĕр статьяра.

**Алексей ЛЕОНТЬЕВ,**
**истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ,**
**Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен**
**институчĕн ăслăлăх ĕçченĕ**